# Тĕп ĕçĕ – кунсерен куç умĕнче

Пурăннă пулсан кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче чăваш чĕлхи тĕпчевçи, куçаруçă, тавра пĕлÿçĕ, чăваш наци юхăмĕн хастар кĕрешÿçи Андрей Алексеевич Алексеев çитмĕл çул тултармаллаччĕ. Шел, вăл хăйĕн çак юбилейне кĕтсе илеймерĕ, 2005 çулхи май уйăхĕн пуçламăшĕнче, шăпах çут çанталăк чĕрĕлнĕ вăхăтра, пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Самани тĕрĕс-тĕкел тăнă пулсан пурăнмалла та пурăнмаллаччĕ-ха ĕнтĕ унăн, çут çанталăк ăна çирĕп сывлăх парнеленĕччĕ. Ахăр саманари тĕлли-паллисĕр пурнăç ун тĕлне инкеклĕ пулса тухрĕ.

А.А.Алексеев Чăваш Республикине кĕрекен Муркаш районĕнчи Рикакасси ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Пăхăр-ха эсир, ку вăл шăпах шкул ачисем парта хушшине ларнă кун пулнă-çке. Калăн шăпа хăех пулас çыравçăпа ăсчаха тăван чĕлхе асамне тĕпчесе çак вăрттăнлăха пулас ăрăва халаллама пÿрнĕ тесе. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан вĕренсе тухсан (1950–1953) И.Я.Яковлев ячĕллĕ udинститутра хăйĕн ăсне-пĕлÿне туптанă. Унтан вĕренсе тухсан 1960–1965 çулсенче Самар облаçĕнчи Чаллăпуç районĕнчи Çĕнĕ Эштепен, Чăваш Эштепен шкулĕсенче ĕçленĕ: ачасене чăваш чĕлхипе литератури, истори вĕрентнĕ, шкул директорĕ пулнă.

1966–1978 çулсенче – Чăваш Республикинчи гуманитари институтĕнчи чĕлхе пайĕн наука сотрудникĕ, 1969–1978 çулсенче – КПСС Чăваш обкомĕн пичетпе информаци секторĕн штатра тăман инструкторĕ. 1979–1988 çулсенче – Чăваш кĕнеке издательствин Вĕренÿпе педагогика литературин редакторĕ.

1988 çултанпа «Тăван Атăл» литература журналĕнче очерк, публицистика тата критика пайне ертсе пычĕ.

А.А.Алексеев тĕпчевçĕ паллă чăвашсен – Н.В.Никольский, Г.И.Комиссаров, В.В.Громов, Д.Ф.Филимонов, Н.Е.Ефимов тата ытти тĕпчевçĕсен – еткерне упраса хăварассишĕн вăй хунă. Чăваш çырулăхĕн малтанхи, И.Я.Яковлевчченхи, тапхăрне тĕпчесе чылай статья пичетлесе кăларчĕ. Республика тулашĕнчи чăвашсем хушшинче наци культурине çĕклесси те унăн чун ыратăвĕ пулнă. Çакна эпир, тулай чăвашĕсем, яланах туйса тăраттăмăр.

Эпир унпа Ульяновскра тата ку ху
ăхри чăваш ялĕсенче сахал мар
пулнă. Вăл пире, вырăнти на
юхăмĕн хастарĕсене, май пур та
яланах пулăшса пыратчĕ. Тă
чĕлхепе тухма пуçланă «Канаш»
ата тăтăшах çырса тăратчĕ. Унта
И.Я.Яковлев просветительпе унă
лăшаканĕсем чăваш алфавитне е
пуçласа яни çинчен пысăк статья
четлесе кăларчĕ. Çаплах Чăнлă
онĕнчи Чăвашкассинче пулса ирт
И.Я.Яковлев кунĕсен уявĕнче икĕ
чен пулса халăх умĕнче тăван чĕ
не упрама чĕнсе хĕрÿ сăмах кал
те асрах. Наци юхăмĕн малтанхи
старĕсем 1920 çулта Чĕмпĕ
кăларма пуçланă «Атăл юрри» жу
ла çĕнĕрен чĕртсе яма та вăл ну
вăй хучĕ. (Шел, пĕр номер тухнă
çăн укçа-тенкĕ çуккипе журналĕ
лех малалла кун çути курайма
Эпир ăна хапăлласах облаçри чă
сен И.Я.Яковлев ячĕллĕ культур
çут ĕç обществин правлени чл
суйланăччĕ.

Андрей Алексеев тĕпчевçĕн
ĕçĕ – «Чăваш чĕлхи орфографи
варĕ». Вăл 2002 çулта Чăваш кĕ
издательствинче пичетленсе ту
Унта 40 пине яхăн сăмахпа сă
майлашăвĕ кĕнĕ. Пичет, радиопа
лекурăм, вĕрентÿпе ăслăлăх ĕçч
сем, вĕренекенсем унпа хăйсен
ленхи ĕçĕсенче усă кураççĕ.

**А.ЮМА**